27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
14
ЫТЛАРИКУН
224(6719) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Татăклă çĕнтерӳсен çулталăкĕ

1944 çулта Хĕрлĕ Çар калама çук пысăк çĕнтерӳсем туса хăйне чапа кăларчĕ. Çавăн пек пысăк та чаплă, стратеги тĕлĕшпе çав тери тарăн шухăшлă тата пысăк мастерлăхпа пурнăçа кĕртнĕ çĕнтерӳсем историре пулман-ха.

Вăрçăсен историйĕ чаплă операцисен примерне сахал мар пĕлет, анчах хальхи пек пысăк тытăçура пĕр мухтавлă çĕнтерӳ хыççăн тепĕр çĕнтерӳ туса, хăйĕн ялавĕсене халиччен нихăçан та нихăш çар та чапа кăларман. Çав тери вăрăм çула нихăш çарсем те Хĕрлĕ Çар пек хăвăрт утса тухайман. Хĕрлĕ Çар кăна историре чи малтанхи хут çавăн пек паттăррăн вăрçса хăйĕн чысне çĕклерĕ.

Хĕрлĕ Çарăн наступлениллĕ операцийĕсем кăçал нихăçанхи пек мар анлă фронтра сарăлса пычĕç. Пăрлă океанран пуçласа Балкан тăвĕсем таран выртакан пĕтĕм фронтра пĕрин хыççăн тепĕр вăйлă çапăçу пулса иртрĕ. Хĕрлĕ Çар хĕçпăшалĕсем тăшманăн хăватлă оборона сооруженийĕсем çине ывтăнчĕç. Фашистла нимĕç çарĕн пĕтĕм фрончĕ вара Европăн хĕвелтухăçĕпе кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче пайăн-пайăн арканса кайрĕ.

Аçа-çиçĕм январь уйăхĕнче кĕрлеме тытăнчĕ. Нимĕçсен Ленинградпа Новгород патĕнчи нумай вăхăтлăха тунă оборонине аркатса тăкса, совет çарĕсем вĕсене Балтика тăрăхне ывăтса ячĕç те Ленинград облаçне ирĕке кăларчĕç. Тепĕр хутĕнче тăшмана çак участокран çĕршер километр аякра — Буг патĕнче пырса çапнă. Нимĕç çарĕсене аркатса тăкса, Хĕрлĕ Çар вĕсене Днестр шывĕн леш енне ывăтса ячĕ те Дон шывĕн сылтăм енчи Украинăна ирĕке кăларчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн наступлениллĕ операцийĕсем килес вăхăтра ăçта пулассине тавçăрса илес тата вĕсене сирсе яма хатĕрленес тесе Германи командованийĕ ахалех тăрăшрĕ. Хĕрлĕ Çар шăпах тăшман кĕтмен вырăнсенче вăйлăрах та вăйлăрах пыра-пыра çапрĕ. Крым, Карели, Витебск, Бобруйск, Могилев, Львов, Кишинев; Яссы; Балтика тăрăхĕ, Карпат тăвĕсем, Венгри, Çурçĕр Финлянди...

Çак вырăнсенче пыра-пыра çапнисем тăшмана, пысăк мăлатук пек, арката-арката тăкрĕç, унăн инженерла сооруженийĕсене тусан пек сирпĕтсе ячĕç, нимĕçсен полкĕсене, дивизисемпе пĕтĕм армисене аркатса тăкрĕç. Оборона тумалли вырăнсенче тытăнса тăма, вăйлă наступлени хумне чарса лартма, çĕмĕрсе тăкнă чăçсене йĕркене кĕртме, çарсене ертсе пырассине йĕркере тытса тăма нимĕçсем ахалех хăтланса пăхрĕç. Тăшмана сывлăш çавăрса илме памасăр, ăна вăйлăн çĕмĕрсе пырса, тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе хĕçпăшалĕсене пĕр шеллесе тăмасăр пĕтерсе пырса, совет çарĕсем никам тытса чарайми хăватпа хĕвеланăçнелле куçса пычĕç.

Совет Информаци Бюровĕн сводкисем фашистла нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă çĕршер те пиншер хуласемпе ялсем çинчен кашни кунах пĕлтерсе тăчĕç. Хĕрлĕ Çар союзлă республикăсен столицисене, область центрĕсене, хуласемпе ялсене, вăрмансемпе уйхирсене, юханшывсемпе кӳлĕсене Тăван çĕршыва тавăра-тавăра пачĕ. Фашистла çĕлен-калтасене Карел-Финн ССР районĕсенчен, Белорусси территорийĕнчен, Советлă Украина, Молдави çĕрĕсем çинчен, Балтика тăрăхĕнчен кăларса сирпĕтрĕ. Юлашкинчен вара пирĕн пĕтĕм çĕр, вăрçăн малтанхи икĕ çулĕнче нимĕçсем оккупациленĕскер, гитлерла ирсĕрсенчен тасалса çитрĕ.

Наступление малалла вăйлатса пырса, Хĕрлĕ Çар Аслă Совет Государствин чиккисем урлă каçрĕ. Пирĕн çĕнтерӳллĕ çарсем Румыни, Болгари, Венгри тата, юлашкинчен, Германи территорийĕ çине кĕрсе кайрĕç. Тĕпсĕр шăтăк патне çитерсе тăратнă хыççăн, румынсем, болгарсем тата финсем мир пама ыйтрĕç те хăйсен хĕçпăшалне нимĕçсене хирĕç çавăрчĕç. Тăван çĕре гитлерла оккупантсенчен ирĕке кăларас ĕçе вĕçленĕ хыççăн, пирĕн Хĕрлĕ Çар халĕ Польша, Югослави тата Чехословаки халăхĕсене гитлерла чуралăхĕнчен хăтарма пулăшать. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнчи лару-тăру тĕпренех улшăнчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсене хаяр та юнлă çапăçусенче тунă. Пирĕн çарсен опытлă та вăйлă тăшмана хирĕç кĕрешмелле пулчĕ. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнин хăватне хăйĕн çурăмĕ çинче тӳссе курнине пула, Германи командованийĕ хăй тытса илнĕ вырăнсене хӳтĕлеме малтанах тата тĕплĕн хатĕрленнĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра кăçалхи çулла нимĕçсен 200 дивизине çити тăнă. Тĕрлĕ вырăнсенчи çутçанталăк условийĕсемпе усă курса, нимĕçсем чи кирлĕ вырăнсенче нумай вăхăтлăха пыракан оборона линийĕсем тунă, вĕсене кучухнехи техника май панă таранах çирĕплетсе хатĕрленĕ.

Малтанхи çапăçусенче тӳссе курнă хурлăхлă опыт хыççăн, нимĕçсем фронт тăршшĕпех тĕреклетнĕ хăватлă оборона линийĕсем тунипех чарăнса тăман, вĕсем хăйсен оборонине час-часах çĕршер километр шалалла туса кайнă, укреплени тунă пĕтĕм вырăнсенче çарсем вырнаçтарса тăратнă. Вĕсем шывсен çыранĕсене, тусен хысакĕсене тĕреклетнĕ, хуласемпе халăх пурăнакан пунктсенчен крепоçсем туса хунă, тĕреклетнĕ линисем хушшинче те хӳтĕленмелли вырăнсем вĕçĕ-хĕррисĕр нумай тунă. Анчах та пирĕн наступленин хăватлă вăйĕ противникăн пĕтĕм оборонине витĕрех çапа-çапа шăтарчĕ. Германин вăрçă машинин чĕри патнех пырса çитрĕ.

Совет çĕрне гитлерла сынçиенсенчен яланлăхах тасатнă. Верховный Главнокомандованин планĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем фашистла дивизисене, корпуссене тата группăсене çавăра-çавăра илсе пĕтере-пĕтере пычĕç. Витебск, Бобруйск, Минск, Броды, Кишинев районĕсенче нимĕç çарĕсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе туса ирттернĕ чаплă операцисем оперативнăй искусствăн, вăрçăри мастерлăхăн чи лайăх тĕслĕхĕсем пулса, вăрçăсен летописне яланлăхах кĕрсе юлаççĕ. Çак районсенче кăна фашистсен вуншар дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкнă. 30 дивизие ытла Хĕрлĕ Çар халĕ Балтика тăрăхĕнче шаккаса çĕмĕрет!

1944 çулта нимĕçсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче хăйсене пĕтерсе лартакан пораженисем тӳсрĕç. Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынипе фашистла блок пĕтĕмпех арканса кайрĕ, гитлерла Германи халь хăйне пĕтĕмпех аркатса тăкас хăрушлăх умĕнче тăрать. Çакăн пек задачăна Хĕрлĕ Çар çеç пурнăçлама пултарчĕ. Хĕрлĕ Çар вăл хальхи вăхăтра чи хăватлă та чи пиçĕхнĕ çар пулса тăрать.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ хăйĕн 1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче панă приказĕнче çапла калать: «Иртнĕ çулхи хĕллехи тата çуллахи çапăçусенче Хĕрлĕ Çар хăйĕн вăрçăри мастерлăхĕ ӳснине кăтартса пачĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсем тăшманăн çирĕплетнĕ тăрăхĕсене пĕлсе тата пултаруллăн çĕмĕрсе пычĕç, тăшмана хыçранах вирлĕн йĕрлесе пычĕç, ăна çавăра-çавăра илсе, пĕтерсе пычĕç. Наступлениллĕ çапăçусенче пур йышши совет çарĕсем те пĕрпĕринпе таччăн çыхăнса, килĕштерсе кĕрешни, маневр тума питĕ лайăх пĕлни палăрчĕ. Совет воинĕсем çапăçусенче пиçĕхсе çирĕпленчĕç, тăшмана аркатма тата çĕнтерме вĕренсе çитрĕç. Хĕрлĕ Çар тăшманшăн хăрушă вăй пулса ӳссе çитĕнчĕ, вăл ĕнтĕ хăйĕн вăрçăри пултарулăхĕ тата çапăçу техники тĕлĕшĕнчен тăшмантан малта тăрать».

Иртнĕ çулталăкра туса ирттернĕ операцисенче Сталинăн çарсене ертсе пырас ăсталăхĕ курăнать. Çав операцисене пурне те Верховный Главнокомандованин пĕр стратеги планĕ пĕрлештерсе тăрать. Тăшмана аркатмаллах пыра-пыра çапнинче Верховный Главнокомандованин стратеги тĕлĕшпе шухăшласа хунă питĕ тарăн шухăшĕ майĕпен сарăлса, палăрса пынă. Кашни операци ытти операцисен ретĕнче хăйĕн вырăнне йышăнса тăнă. Çав вăхăтрах кашни операци хăйне уйрăм операци, ытти сенчен уйрăлса тăракан операци пулса тăнă, унта пултаруллă гений палăрса тăнă.

Пуринчен вăйлăрах пырса çапмалли района тĕрĕс суйласа илесси çапăçура çĕнтермелли чи паха услови пулса тăрать, тесе шутлать вăрçă искусстви. Сталин юлташ 1920-мĕш çултах çапла çырнă: «...Анăçу, татăклă çĕнтерӳ чылай чухне пырса çапмалли района лайăх суйласа илнинчен, тăшмана пуринчен вăйлăрах пырса çапмалли тата çав пырса çапнине малалла аталантармалли района пĕлсе суйланинчен килет». Мĕнпур ĕмĕрсенчи чи чаплă полководецсем çак задачăна чи йывăр задача тесе шутланă. Кăçалхи хĕллехи тата çуллахи кампанисенче Хĕрлĕ Çар туса ирттернĕ операцисенче çав задачăна питĕ чаплă пурнăçланă.

Татса кĕмелли участоксенче тăшманăннинчен йышлăрах вăйсем тата тупăсемпе танксем, самолетсем, машинăсем калама çук нумай вăрттăн пухса тăратнă. Çапла кирлĕ хатĕрсем парса тăмалли пĕтĕм кăткăс организма çав шухăшласа хунă операцие пурнăçа кĕртме кирлĕ пек улăштарнă. Наступлени туса пыракан пĕрремĕш эшелонсене хăватлă резервсем тĕреклетсе тăнă. Çавна пула вара ĕç фронта татса кĕнипе çеç чарăнман, ĕçе татăклă результатсем пуличченех, тăшман группировкине пусĕпех аркатса тăкиччченех туса пынă.

Тăшмана çĕнтерме мĕнпур вăйсемпе тата хатĕрсемпе усă курнă. Пур йышши çарсем те пĕр-пĕринпе тĕплĕ план тăрăх тата меллĕ çыхăнса тăни Хĕрлĕ Çарăн кашни операцийĕнчех палăрать. Кашни йышши хĕçпăшалăн чи лайăх енĕсемпе вĕçне çитиччченех усă курнă. Совет çарĕсен наступлениллĕ çапăçăвĕсенче палăракан çав тери пысăк чăрсăрлăх, хăюллă маневр — çаксем ĕнтĕ пулас операцисене туса ирттерме шăп çавăн пек пур енчен те хатĕрленсе çитнинчен килеççĕ. Совет воинĕсем вĕренсе çитни тата вĕсен хастарлăхĕ вара çак пахалăхсене тата ытларах ӳстерсе янă.

Хĕрлĕ Çар тата Англипе Америка çарĕсем пĕрле пыра-пыра çапни гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкас сехете çывхартаççĕ. «Фашистла тискĕр кайăкăн шăтăкне пур енчен те хупăрласа илнĕ, тăшман темле чеен хăтлансан та ĕнтĕ хăйне пĕтĕмпех аркатса тăкассинчен çăлса хăварма пултараймасть» (И. Сталин). Совет çарĕсем нимĕçсен çĕрĕ çине пырса кĕнĕ ĕнтĕ, вĕсем Германие кăнтăр-хĕвелтухăç енчен, хĕвелтухăç енчен тата çурçĕр-хĕвелтухăç енчен хăратса тăраççĕ, союзниксен çарĕсем хĕвеланăçпе кăнтăр-хĕвеланăç енчен хĕсеççĕ. Гитлерла Германи халь мăлатукпа сунтал хушшинче тăрать. Çуллахи наступлени вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çар çапăçса 550 километртан пуçласа 900 километра çити малалла кайнă. Халĕ пирĕн малти чаçсем Берлинран 550 километртра тăраççĕ. «Халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар умĕнче унăн юлашки миссийĕ тăрса юлчĕ: пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлермелле тата Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартмалла. Хĕрлĕ Çар çав задачăна çитес çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕртĕ тесе шутлама çителĕклех сăлтавсем пур»—тенĕ Мускав Совечĕн ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулнă чаплă ларăвĕнче аслă Сталин.

Гитлерла юнлă режимăн кунĕсем пĕтсе пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар тата пирĕн союзниксен çарĕсем фашистла Германин чи кирлĕ центрĕсем çине татăклă наступлени пуçласа ямалли позицисем йышăннă. Гитлерла вăрă-хурахсене тĕрĕслĕх судĕнчен, истори тавăрассинчен нимĕн те çăлса хăвараймĕ. Паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем хамăрăн тĕрĕслĕхлĕ ĕçе çиеле кăлараççишĕн юлашки татăклă çапăçусем туса ирттерме хатĕр тăраççĕ. Гениллĕ полководец аслă Сталин ертсе пыракан çĕнтерӳллĕ совет дивизийĕсем, пирĕн союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, фашистла тискер кайăка вĕлерĕç. Берлин çине çĕнтерӳ ялавне çĕклесе лартĕç.

(«Правда», ноябрĕн 13-мĕшĕнчи умстатья).

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТИССА шывĕпе ДУНАЙ шывĕ хушшинче, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ. вăл шутра—ШАЙО СЕГЕД, НЕМЕШ БИК, ХЕЕ САЛОНТА, СИХАЛОМ, ЯСЛАДАНЬ, УЙСАС ялĕсем тата МЕЗЕНЬЯРАД, КЛЕМЕНТЫНА, ЯСЛАДАНЬ, УЙСАС чугун çул станцийĕсем.

Югославире нимĕçсене хирĕç кĕрешекенсем Болгари çарĕсем ШТИП хулипе ВЕЛЕС хулине ирĕке кăларнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, нимĕçсен 8 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

НОЯБРĔН 12-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрире МЕЗЕКЕНВЕШД хулипе чугун çул станцине, МОНОР хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ДЬЕРДЬ, ЯНОШХИДА, АЛАТЬЯН ТАПИОДЬЕРДЬЕ, ТАПИОСЕЛЕ, РЕКЕТЕШИ, ФАРМОШ, ШЕРЕГ ятлă пысăк ялсем тата КИШ-МЕДЕ-РИ, ТАПИОСЕЛЕ ФАРМОШ, ВОЛОГХАЗА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Югославире нимĕçсене хирĕç кĕрешекен Болгари çарĕсем КУМАНОВО хулине йышăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 15 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Венгрире пирĕн çарсем тăшманăн Мезекевешд хулине хӳтĕленĕ гарнизонне хĕстерсе лартнă. Гитлеровецсем хытă хирĕç тăнă, анчах та вĕсене аркатса тăкнă. Совет пехотинецĕсем Мезекевешд хулине виçĕ енчен вăркăнса кĕрсе кайнă та хулана тытса илнĕ. Тăшманăн 800 салтакне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Тепĕр участокра, Сальнок хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн пехотăпа кавалери чаçĕсем тата моторизованнăй чаçсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхне татнă. Нимĕçсем çапăçăва хăйсен резерври чаçĕсене кĕртсе янă, темиçе хут та контратака тунă. Совет çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре, 10—15 километр малалла кайнă. Ку районри çапăçусенче нимĕçсемпе венгерсене пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Пĕр участокра кăна пĕр чаçри боецсем 600 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 8 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă çунтарса янă. 22 тупă, 40 миномет, боеприпассен, çар пурлăхĕн тата апат-çимĕçĕн темиçе складне тытса илнĕ.

Цеглед хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем вăйлă çапăçнă хыççăн Монор хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ. Монор хули Будапешт хулинчен 25 километртра ларать, вăл Венгри столицине пырса кĕмелли çулсем çинчи вăйлă тĕреклетнĕ пункт пулнă.

Кун каçа нимĕçсемпе венгерсен 700 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн подразделенисем чылай участоксенче çапăçса разведка тунă. Пĕр районра совет боецĕсем тăшман тăнă вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕçсен ушкăнне аркатса тăкнă. Эсэсовецсен «Герман Геринг» ятлă танковăй дивизийĕнче тата ытти соединенисенче тăнă салтаксене тыткăна илнĕ. Кун каçа 200 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем, ирхи тĕтрепе усă курса, миномет батарейине мала кăларса лартнă. Вĕсем пирĕн çапăçури ретсене пеме шутланă. Совет боецĕсем нимĕçсенчен малтантарах пеме тытăннă. Пирĕн артиллеристсем вара тăшман миномечĕсен батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ужгород хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман пехотин отрячĕ совет позицийĕсем патне вăрттăн çывхарма хăтланнă. Пирĕн боевой охранени гитлеровецсене вăхăтра асăрханă та пăшалсемпе, пулеметсемпе пеме тытăннă. Хăйсен 60 салтакĕпе офицерне çити вилсе пĕтсен, нимĕçсем васкасах каялла чакнă. Тепĕр районра пирĕн подразделенисем лайăх позицисем тытса илнĕ. Тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире нумаях пулмасть пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕç çарĕсене питех те йывăр çухату тӳстернĕ. Нимĕçсен 50-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 121-мĕш полкра тăнă салтаксен хăйсен ирĕкĕпе тыткăна парăннă ушкăнĕ çапла каласа кăтартнă: «50-мĕш дивизие кăçалхи çуркунне Крымра пĕтерсе тăкрĕç. Çулла нимĕç командованийĕ Германире çĕнĕ дивизи турĕ те, çав 50-мĕш номере парса, Гродно хули районне ячĕ. Дивизие вырăс çарĕсене Неман шывĕ патĕнче чарса лартма приказ пачĕç. Гродно хули патĕнчи çапăçусенче вырăссем 50-мĕш дивизие каллех çĕмĕрсе тăкрĕç. Вара кĕркуннепе çав дивизие çĕнĕ вăйсем хушса пачĕç те Хĕвелтухăç Пруссие ячĕç. Çапăçусен малтанхи икĕ кунĕнчех 121-мĕш полкри ротăсенче нумайĕшĕсенче унти çынсен 70—80 проценчĕ пĕтрĕ. Пирĕн ротăра 6 çын кăна чĕррĕн тăрса юлчĕ, вара эпир пурĕ пĕрле тыткăна парăнтăмăр».

Нимĕçсен 149-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 911-мĕш полкран тыткăна парăннă ефрейтор Фрей çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизие Хĕвелтухăç Пруссири çынсенчен тунă. Çак кунсенче пирĕн полка вырăссене хирĕç контратака тума приказ пачĕç. Вырăссем пире пулеметсемпе тата танксене пемелли тупăсемпе вăйлăн пеме пуçларĕç. 15 минута хушшинче пирĕн ротăна пĕтерсе тăкрĕç. 60 çынтан 14 салтак кăна каялла таврăнчĕç. Ытти подразделенисем те çавăн пекех йывăр çухатусем тӳсрĕç. Тепĕр кунне эпир каллех темиçе атака турăмăр, анчах та нимĕнле çитĕнӳ те тăваймарăмăр».

Нимĕçсен 549-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 1.099-мĕш полкри 8-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Матиас Гамбек çапла каласа панă: «Эпир ирхине ирех, командовани панă приказ тăрăх, атака пуçласа ямалли вырăна йышăнтăмăр. Сасартăк пирĕн участока вырăссен 14 танкĕ татса кĕрсе кайрĕç. Совет танкисчĕсем пирĕн батальона ытти подразделенисенчен татса илчĕç те эпир пурте «хурана» кĕрсе ӳкрĕмĕр. Салтаксем нумай вилсе пĕтрĕç. Чĕррĕн юлнисем алăри хĕçпăшала пăрахрĕç те тыткăна парăнчĕç».

Колхозăн патриотла ĕçĕсем

Красноармейски районри Калинин ячĕпе тăракан колхозри пахча-çимĕç звенин звеновочĕ Анастасия Кириллова кăçал уйрăмах пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илнĕ. Кăçал вăл çĕр лаптăкне перекетлемелли меслетсемпе тĕплĕн усă курнă. Купăста вăрлăхĕ тума лартнă кучансем хушшине выльăх кăшманĕ акнă.

Кириллова звенине 9 гектар çĕр уйăрса панă пулнă. Планпа пăхнă тăрăх, кашни гектартан купăста 100 центнер, кăшман 100 центнер илмелле пулнă. Кириллова звени гектар пуçне купăста 300 центнер, кăшман 140 центнер туса илнĕ. Унсăр пуçне, Кириллова юлташăн звени государствăна 80 килограмм купăста, 24 килограмм хăяр вăрлăхĕ туса панă. Кăшман вăрлăхне те чылай тунă. Вĕсене ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз пысăк мар, унта икĕ бригада çеç ĕçлет. Çак икĕ бригадăри патриотсем 204 гектар çинчи тыррa вăхăтра, октябрĕн 16-мĕшĕнче, çапса пĕтернĕ. Кашни гектартан 14 центнера яхăн тĕштырă амбара кĕртнĕ. Уйрăмăн илсен, гектартан ясмăк 18,51 центнер, вика 16,54 центнер, ыраш 12 центнер ытларах пухса илнĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă, çĕрулми, пахча-çимĕç памалли обязательствăсене срокчен пурнăçланă. Планран ирттерсе, 1945 çулшăн 453 килограмм аш-какай, 1.600 литр сĕт, 45 центнер тырă, 1.000 çăмарта панă. Кусемсĕр пуçне, Калинин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсем «Çĕнтерӳ фондне» 320 литр сĕт, 70 центнер çĕрулми тата ытти продуктсем те панă.

Çапла, колхозниксем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнине патриотла ĕçленипе кĕтсе илсе уявласа ирттерчĕç.

С. ШАДИН.

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.).

Выльăх витисем хĕле хатĕр

Етĕрне районĕнчи Ирçе ялсоветне «Комбайн» тата «Сура» колхозсем кĕреççĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ялсоветĕнчи çамрăксем ферма çурчĕсене тата витесене лайăх юсаса ăшă каймалла мар тума обязательство илнĕччĕ. Çак обязательствăна эпир, икĕ колхозри çамрăксемпе комсомолецсем, ăнăçлăн пурнăçларăмăр. Пирĕн витесем тата ферма çурчĕсем пĕтĕмпех юсавлă. Ялсоветне кĕрекен «Чуваш. ЦИК» колхоз выльăхсене хĕл каçарма начар хатĕрленнине кура, эпир ăна пулăшма шутларăмăр. Ферма çурчĕсене витме улăм турттарса патăмăр тата ферма картишĕнчен 80 лава яхăн тислĕк кăлартăмăр.

И. МОКЕЕВ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Ӳкерчĕк çинче: гварди сержанчĕ А. Горский. Нимĕç захватчикĕсемпе паттăррăн çапăçнăшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата «Çапăçури паха ĕçсемшĕн», «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн» медальсемпе наградăланă. А. Горский — Элĕк районĕнчи Çулавăçран.

Хĕрлĕ Çар фондне—çĕрулми тата пахча-çимĕçсем

ИШЛЕИ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташ Октябрьти социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада тата унăн ноябрĕн 7-мĕшĕнче кăларнă приказне сӳтсе-явма районри пур колхозсенче те митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ.

Аслă çулпуç колхозниксен ĕçне пысăка хурса хаклани вĕсене фронта пулăшас тĕлĕшпе тата лайăхрах ĕçлеме вăй-хăват парать. Çулпуçăн доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем, государство умĕнчи пур парăмсене те вăхăтра парса татма тата çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитме пулаççĕ.

«Парижская Коммуна» колхоз членĕсем пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 420 пăт çĕрулми пухса пачĕç. Çавăн пекех «МОПР» колхоз 840 пăт, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 480 пăт, «Верный путь» тата «Ырашпулăх» колхозсем 420-шер пăт çĕрулми леçсе пачĕç. Çапла вара хăйсен обязательствисене пурнăçларĕç.

И. ПИДУГАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

МУРКАШ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ пичетленнĕ хаçатсем çитсенех, колхозсенче пухусем пулса иртрĕç. Вăл пухусенче çынсем нихăçанхинчен те нумайрах пулнă.

«Новая жизнь» колхозра, колхоз председателĕ коммунист Ефремов Сталин юлташ докладне вуласа парсан, нумай колхозниксем хăйсен савăнăçлă шухăш-кăмăлĕсене каласа панă. Вĕсем, çак асран кайми докладпа хавасланса, тата лайăхрах ĕçлеме пулнă. Сталин юлташăн доклачĕпе паллашнă хыççăн тепĕр куннех Хĕрлĕ Çар фондне пама çĕрулми турттарса кайнă.

Тельман ячĕпе тăракан колхоз Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 480 пăт çĕрулми леçсе панă.

В. АНДРЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

КУСЛАВККА. Пилешкассинчи «Путь Маркса» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 127 центнер купăста пама йышăннă. Çакна хăвăртрах пурнăçлас шутпа, колхоз ятарласа транспорт бригади организациленĕ. Çапла вара колхоз пахча-çимĕçĕсене кĕске вăхăтрах государствăна парса татнă.

Е. МАРКОВА.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç пама чĕнсе каланине йышăнса хăйсем илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Районри колхозсемпе колхозницăсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне чылай çĕрулми пама пулчĕç. Вăл çĕрулмие хатĕрлев пунктне леçсе çитернĕ те ĕнтĕ. Хырай-Ĕнелĕнчи «Искра» колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 73 центнер, «Красный Октябрь», «Красный воин» тата Красин ячĕпе тăракан колхозсем 60-шар центнер çĕрулми леçнĕ. Эльбусь-Сюрбеевăри «Красный воин» колхоз членĕсем 80 центнер, вăл шутран колхоз бригадирĕ Д. Корнилов юлташ 12 пăт, панă. «15 лет Чувашии» колхозри ВЛКСМ организацин секретарĕ Супрувенко юлташ 12 пăт, «Новая жизнь» колхозăн конюхĕ Красильников юлташ 12 пăт панă.

(«Октябрь ялавĕ»).

РАЦИОНАЛИЗАЦИЛЛЕ СĔНӲСЕМ

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра кăçал 107 рационализациллĕ сĕнĕве ĕçе кĕртнĕ. Çакă вăл завода 240 пин тенкĕ перекетлеме май панă. Инженер Шехтман юлташ панă пĕр сĕнӳ кăна 17.200 тенкĕ перекетлеме май парать.

Хĕрлĕ Çарта срокран юлса нумай çул хушши ĕçленĕшĕн орденсем пани

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Хĕрлĕ Çара срокран юлса нумай çул хушши ĕçленĕшĕн маршалсемпе генералсен пĕр ушкăнне орденсем панă.

Хĕрлĕ Ялав орденне çаксене панă: Совет Союзĕн Маршалĕсене—С. М. Буденныя, К. Е. Ворошилова, Г. К. Жукова, Артиллерин Главнăй Маршалне Н. Н. Воронова, Артиллери Маршалне Н. Д. Яковлева, Бронетанковăй çарсен Маршалне Я. Н. Федоренкăна, Инженери çарĕсен Маршалне—М. П. Воробьева, арми генералне А. И. Антонова, генерал-полковниксене—Ф. И. Голикова, М. С. Громадина, И. В. Смородинова, Н. Е. Чибисова, Е. А. Щаденкăна, танковăй çарсен генерал-полковникне Н. И. Бирюкова тата артиллери генерал-лейтенантне В. В. Аборенкова; Хĕрлĕ Çăлтăр орденне артиллери генерал-лейтенантне И. С. Прочкона панă.

М. И. Калинин наградăсем илнĕ маршалсемпе генералсене чĕререн саламланă.

— Иртни çине çавăрăнса пăхсан, çакă курăнать, — тенĕ Калинин юлташ: — нумай çул хушши Хĕрлĕ Çарта ĕçленĕ вăхăтра сирĕнтен кашниех Хĕрлĕ Çара халĕ вăл Отечественнăй вăрçă фронтĕнче çав тери чаплă палăртакан пахалăхсен пĕр пĕчĕк пайне панă.

— Сире тата нумай-нумай çул хушши совет халăхĕн лайăх пурнăçĕшĕн ĕçлеме чунтан ырă сунатăп, тенĕ. (ТАСС).

КИЕВРИ ХĂВАТЛĂ РАДИОСТАНЦИ

Киевра радио саракан хăватлă радиостанцие хута янă. Радиостанцие оборудованин вырнаçтарса лартас ĕçре Мускаври радио сарас ĕç дирекцийĕн рабочийĕсемпе специалисчĕсем пысăк пулăшу панă. (ТАСС).

«НЕПОКОРЕННЫЕ» ЯТЛĂ ФИЛЬМ ӲКЕРЕÇÇĔ

Киеври кино студийĕ «Непокоренные» ятлă кинофильм валли ӳкермелли вырăнсене ӳкерсе илнĕ. Çав фильма Б. Горбатовăн «Непокоренные» ятлă повеçĕ тăрăх ӳкереççĕ. Çав фильм Киева ирĕке кăларнă хыççăн ӳкерекен пĕрремĕш илемлĕ фильм пулса тăрать.

Сценари авторĕсем Б. Горбатовпа М. Донской фильма повеçре кăтартман çĕнĕ çынсене те кĕртнĕ, вĕсем унта вунă старике-рабочие кĕртнĕ. Çав стариксем, нимĕçсем тустарса пĕтернĕ çĕр тăрăх Тараспа пĕрле пырса, çынсене гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешме организациллеççĕ.

Юлашки кунсенче икĕ массăллă картинăна ӳкерсе илнĕ: Бабий Ярта мирлĕ халăха персе вĕлернине тата хăйсен юлташне пытаракан стариксен ушкăнĕ (ăна Тарас ертсе пырать) персе вĕлерме илсе каякан мирлĕ çынсен ушкăнĕпе тĕл пулнине ӳкерсе илнĕ. Пĕтĕмпе темиçе пин çынна ӳкернĕ. Киев çыннисем, нимĕçсем халăха пере-пере вĕлернине хăйсем курнăскерсем фильма ӳкерекенсене лайăх канашсем панă. Çав фильма Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле туса пĕтермелле. (ТАСС).

Депутатсене пĕлсе тăма

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН VIII-мĕш СЕССИЙĔ ШУПАШКАРТА 1944 ÇУЛХИ НОЯБРĔН 15-мĕшĕнче, 18 СЕХЕТРЕ, СОВЕТСЕН ÇУРЧĔН ЛАРУ ЗАЛĔНЧЕ УÇĂЛАТЬ.

ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ ТАВАТТĂМĔШ КВАРТАЛТИ ПЛАНА НОЯБРĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа)		Мĕнле вырăн йышăнать	
	Турттарас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе	Турттарас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	55.8	49.2	1	3
Куславкка	51.0	70.4	2	1
Шăхасан	45.2	44.0	3	6
Октябрьски	45.1	42.2	4	7
Первомайски	40.8	33.5	5	15
Комсомольски	37.1	34.5	6	14
Красноармейски	33.0	49.3	7	2
Элĕк	32.9	21.2	8	21
Елчĕк	32.5	40.6	9	8
Шупашкар	32.4	44.2	10	5
Етĕрне	30.5	25.8	11	20
Калинино	30.2	29.4	12	16
Вăрмар	30.0	19.7	13	22
Чурачăк	28.8	27.0	14	17
Вăрнар	28.1	12.2	15	27
Канаш	25.7	16.6	16	24
Советски	23.0	16.7	17	23
Тăвай	22.5	26.1	18	19
Пăрачкав	22.3	36.6	19	10
Хĕрлĕ Чутай	21.4	34.8	20	13
Çĕрпӳ	20.8	26.7	21	18
Муркаш	19.7	16.6	22	25
Чкаловски	19.6	35.6	23	12
Сĕнтĕр	18.9	15.9	24	26
Çĕмĕрле	18.8	45.0	25	4
Сĕнтĕрвăрри	18.0	35.8	26	11
Кувакино	17.0	39.5	27	9
Ишлей	5.6	11.3	28	28

ÇĔНТЕРӲШĔН ĔÇЛЕТПĔР

Октябрь уявне пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илме вĕреннĕ. Кутемер ялсоветне кĕрекен «Коммунист», «Путь Ленина», «Единство» тата «Красный борец» колхозсенче [illegible]

Ф. ДАНИЛОВА.
Октябрьски районри Кутемер ялсовечĕн председателĕ.

Ĕçкунĕ пуçне вышăр килограмм çĕрулми валеçнĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. [illegible]

(Коммунар).

Шупашкар хулинчи партактивăн пухăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарти партактивăн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху политикăллă-массăллă ĕç тата идеологи ĕçĕ Шупашкар хулинчи парторганизацинче мĕнле пулса пыни тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов юлташ тунă доклада итлесе сӳтсе явре.

Докладчик массăллă-политикăллă ĕçпе идеологи ĕçĕн пĕлтерĕшĕ çинчен, хамăрăн кадрсен идейăпа политика пĕлĕвне çĕклес задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Шупашкарти пиншер коммунистсемпе комсомолецсем большевиксен партин историйĕпе теорине хăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренмелли кружоксене çĕршер юлташсем çӳреççĕ. ВКП(б) хула комитечĕн парткабинечĕ марксизм-ленинизм теорине вĕренекен юлташсене пулăшма лекцисемпе консультацисем ирттерет. Парти горкомĕ çумĕнчи докладчиксен группи 40 çынтан тăрать. Вăл юлашки вăхăтра 300 яхăн лекципе доклад туса ирттернĕ, вĕсене 26.000 çын ытла итленĕ. Хулари парторганизацинчи чылай коммунистсем хăйсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Краснов юлташ (Юстици Халăх Комиссарначĕ) «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес тĕлĕшпе кулленех ĕçлет, Энгельсăн «Диалектика природы» ятлă кĕнекине вĕренет, политикăллă докладсем час-часах тăвать. Чăлха фабрикинчи 16 агитатортан тăракан агитколлектив рабочисемпе работницăсем хушшинче кулленех калаçусем ирттерет, вĕсене хаçатсем вуласа парать. Фабрикăра кашни уйăхрах политикăллă докладсем туса пăраççĕ. Парт-[illegible]

пахалăхлă материалсем параççĕ, пысăк ĕçсем çинчен чылай чухне нимĕн те пĕлтермеççĕ.

Хулари культурăллă-çутĕç учрежденисен ĕçне чылай лайăхлатни кирлĕ. Клубсем начар ĕçлеççĕ. Хулари кинотеатр хăйĕн ĕçне халиччен тивĕçлипе йĕркелесе çитермен. Кунта вуламалли пӳлĕм çук, кино-картинăсене чылай чухне начар кăтартаççĕ. Академи театрĕн çуртне юсаса йĕркелес ĕç тӳсме çук вăраха кайрĕ.

Чăвашгизпа Писательсен Союзĕн ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Вĕсем час-часах çителĕксĕр пахалăхлă произведенисем кăлараççĕ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XX-мĕш пленумĕ çак ыйтупа йышăннă решени сывăх вăхăтра пурнăçа кĕртмелли программа пулса тăрать, тет докладчик. Çав решение пурнăçа кĕртесси — Шупашкар хулинчи парторганизацин пысăк задачи пулса тăрать.

Юлашкинчен докладчик Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада тата вăл ноябрĕн 7-мĕшĕнче кăларнă приказа вĕренес тата пурнăçа кĕртес тĕлĕшле тумалли ĕçсем çинчен калать. Çав документсене халĕ пирĕн пĕтĕм ĕçĕн никĕсне хывмалла. Çулпуçăн доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, пирĕн фронта пулăшас, хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе малалла вăйлатса пымалла.

Иванов юлташ доклачĕ тăрăх пренире 13 çын тухса каларĕ. Полукаров, Брикер, Соколова (Ялхуçалăх институчĕ) юлташсем хăйсен парторганизацисенче массăллă-политикăллă ĕç мĕнле пулса пыни çинчен каласа пачĕç. Пренире çавăн пекех тата Праудин (Академи театрĕ), Григорьев (Наукăпа тĕпчев институчĕ), Плетнева (Горисполком), Кац, Дощатов, Киреева (Когиз), Краснов (Наркомюст), Кăлкан (Искусство управленийĕ), Кошевер (пир-авăр фабрики) юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ. Вăл хулари культурăллă-çутĕç учрежденийĕсен ĕçне критиклерĕ. Чарыков юлташ Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада вĕренесси çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Çак историллĕ документа кашни рабочипе служащие, кашни килхуçи хĕрарăмне хăвăрт та тĕплĕн ăнлантарса памалла. Доклада вуласа панипех чарăнса тăмалла мар, Сталин юлташăн кашни сăмахĕн шухăшне массăсем патне çитермелле, çапла вара ĕççыннисен производствăри активлăхне çĕклемелле. Чарыков юлташ Шупашкар хулинчи коммунистсене аслă Сталинăн доклачĕпе приказĕнче лартнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн пыракан кĕрешӳре малти ретре пулма чĕнчĕ.

Партактивăн пухăвĕ пысăк çĕкленӳпе Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Пуху решени йышăнчĕ, çав решенире массăллă-политикăллă ĕçе тата идеологи ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе хулари парторганизацисем пурнăçа кĕртмелли мерăсене палăртса хăварчĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). [illegible]

Докладсемпе лекцисен тематики пуян мар. Докладсене тĕрлĕрен ыйтусем тăрăх тĕплĕн туса ирттермеççĕ. ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕ чылай семинарсем ирттернĕ. Анчах çав семинарсене коммунистсем нумайĕшĕ çӳремен.

Тухса калакансем колхозсенче клубсемпе вулав çурчĕсем çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. Мартынкинăпа Байзубино тата Çавалçырма ялсовечĕсенчи вулав çурчĕсем ĕçлемесĕр лараççĕ.

Партин районри пухăвĕ çак ыйтупа чылай ĕçсем тума палăртса хăварчĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа райсовет исполкомĕн председателĕ И. Александров юлташ доклад туса пачĕ. Пренире 12 çын тухса каларĕç. Вĕсем район ялхуçалăх çулне начар мар вĕçленине палăртрĕç. Государствăна тырпул вăхăтра парса татнă. МТС çулталăк планне 95 процент тултарнă. Хальхи вăхăтра районри колхозсенче вăрлăх фончĕсем хывас ĕç пырать. Чылай колхозсем ку фонда хывса çитернĕ те ĕнтĕ. Анчах «Ударник», «Большевик», «Свобода» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем, тырпул лайăх пулнă пулин те, вăрлăх фончĕсене хывса çитермен. Пуху государствăна сӳс-кантăр парас ĕç çителĕксĕр пынине палăртрĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ 1945 çулхи çуракине лайăх хатĕрленсе, ăна кĕске вăхăтра ирттерме хатĕрленмелли ĕçсене палăртрĕ. Республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнассишĕн колхозсемпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма йышăнчĕ.

[illegible]сен ачисене пулăшни

ЧКАЛОВСКОЕ. [illegible]

А. КАДЫКОВА.

* * *

ИШЛЕЙ. Ишек ялсовечĕ фронтовиксен семьисене пулăшас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Çак кунсенче колхозниксем фронтовиксен семьисем валли 122 кубометр вутă хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне фронтовиксен ачисене пулăшма ялсоветне кĕрекен колхозсем шкула 56 тир, 14 килограмм çăм тата 1200 тенкĕ укçа пухса панă.

З. М.

КОМБАЙНЕР А. И. ИВАНОВ

Вăрçă пуçланаччен Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнер Андрей Иванович хăйĕн ывăлĕпе ĕçленĕ. Ывăлĕ унăн помощникĕ пулнă. Андрей Иванович унпа мĕнле уйăрăлнине лайăх астăвать:

— Эпĕ ватăрах пулĕ, ывăлăм, мана вăрçа илмĕç, — эпĕ кунта ĕçлĕп. Кăкрăм çинче, мĕнле пулсан та, «Мастеру комбайновой уборки» тесе çырнă значок пур, унсăр пуçне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пултăм. Шухăшлатăп: ман ята çĕртмĕн, тăшмана парăнмăн, унпа чăн-чăн совет воинĕ пек çапăçăн... Кунти ĕçсем çинчен çырсах тăрăп. Эсĕ унти ĕçсем çинчен çырса тăр...

— Юрĕ. Мĕн тумаллине пĕрне те манмăп, — тенĕ Петĕр, комбайнер помощникĕ.

Унтанпа ĕнтĕ сахал мар вăхăт иртнĕ. Малтанлăха чакма тивнĕ, анчах часах хаяр тăшмана Хĕрлĕ Çар хăйĕн шăтăкнелле хăваланă. Халь — эпир Пруссире, халь эпир—Карпат тăвĕсем урлă каçрăмăр, — тесе çырнă ашшĕ патне ывăлĕ.

— Малалла тапса сикрĕмĕр. Мана «За отвагу» медаль пачĕç...

— Малаллах пыратпăр. Эпĕ «За боевые заслуги» медаль илтĕм...

Çапла пĕлтерсе тăнă вăрçă хирĕнчен ывăлĕ хăйĕн ашшĕне.

Ашшĕ кашни çул тырă вырма пуçлаччен малтан çапла çырса тăнă:

— Комбайна юсаса пĕтертĕм. Шанчăклă юсарăм, 400 гектартан кая мар вырма шутлатăп.

Тепĕр çырура:

— Комбайн вырмалли участоксене лайăх хатĕрлерĕм. Бензинпа ĕçлекен мотора краçинпа ĕçлемелле турăмăр. Бензин сирĕн патăрта кирлĕ...

Тата тепĕр çырура:

— Ĕçсем лайăх пыраççĕ. Кашни кун 15—16 гектар выратăп. Помощниксем ман маххă памаççĕ. Пĕри Аркадий Павлов, тепри Данил Касканов. Хушнă ĕçе вăхăтра тата лайăх пахалăхпа тăваççĕ.

Çапла çырусем çырса тăнă ашшĕ ывăлĕ патне.

Вăл — аллă икке çитнĕ, хуйхăрма юратман, ĕçрен хăраман, питĕ килĕшуллĕ çын. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна пĕлекен, паллакан çын унпа пĕрле сăмах та пулин калаçса илмесĕр тăма пултараймасть.

— Да... чăнах та, уйрăмах лайăх çын вăл; Андрей Иванч...—теççĕ ăна пĕлекенсем.—Вăл 8 çул комбайнер пулса ĕçлет. Пĕр çулĕнче те 400 гектартан кая вырман пулас. Кунсăр пуçне тата мĕн чухлĕ урăх ĕç тăвать пулĕ: авăн çапнă çĕрте, тимĕрçĕ ĕçĕнче... Ĕçне тăвать-ха, хăй татах: «Ах, тата çавна тумаллаччĕ-çке!» тет. Ман шутпа, ун вăйĕ — ĕçе пĕтĕм чунтан паăнса ĕçленинче. Çавăнпа та вăл нихçан та ывăнмасть... Пĕр сăмахпа каласан, вăл чăн-чăн совет çынни! — теççĕ МТС-ри работниксем. Хăйĕн кăçалхи çитĕнĕвĕсем çинчен А. И. Иванов çапла каларĕ:

— Комбайна кирлĕ вăхăтра ремонтланă; ĕç вăйне кирлĕ пек организациленĕ, вырма тухаччен, яланхи пекех, участоксене хытă сăнаса тăнă, ăçта малтан вырмаллине малтанах палăртса хунă. Пулăшакансем — пултаруллă çынсем. Кăçал 405 гектар выртăмăр. Хăшпĕр кунсенче 18 гектар вырса пăхрăмăр. Хам помощниксене ыран мĕн тумаллине, ăçта вырмаллине кăнаках паллаштарса пынă. Комбайна ĕçе хатĕрлессине тĕттĕм чухнех пуçланă, 8 сехетре комбайн обязательнă хутра пулнă. Каçхине тырă нӳрленичченех ĕçленĕ. Каç будкăра ирттернĕ, унта-кунта çӳресе вăхăта ирттермен. Çапла вара ытти çулсенчи пекех ăнăçлă ĕçлерĕмĕр. Ывăлăм умĕнче парăмлă пулмарăм. Унпа час-час çыру çӳрететпĕр. Юлашки çырăвĕнче çырнăччĕ-ха. Ну, тет, тăшман ĕмри пит кĕске юлчĕ, унăн ĕмри татăлсанах, ĕлĕкхи пекех санăн помощнику пулма ĕмĕтленетĕп, йышăнатăн-и, — тет.

А. Иванов чарăнса тăчĕ те, сăмаха çапла вĕçлерĕ:

— Кĕтетĕп. Хам та пит кĕтетĕп. Ывăлăма та тата ытти çынсене те. Нумай вăхăт иртмĕ — эпир хамăр пурнăçа вăрçăчченхинчен те илемлĕрех те пурлăхлăрах тăвăпăр.

В. РЗАЙ.

Вулав çурчĕ ĕçлемест

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче колхозниксемпе колхозницăсем çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчере пулса иртекен политикăллă ĕçсемпе питĕ интересленеççĕ. Вĕсене фронтри хыпарсем çинчен, Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе тĕнчери лару-тăру çинчен вăхăтра та лайăх ăнлантарса памалла. Çак ĕçре ялсенчи вулав çурчĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах пирĕн Çавалçырмари вулав çурчĕ пачах та ĕçлемест. Районри çутĕç пайĕ ку таринччен те вулав çурчĕн заведующийĕ пулса ĕçлеме çын тупса паман. Вулав çуртĕнче музыка инструменчĕсем, биллиард, шашка-шахмăт тата ыттисем те пурччĕ, халĕ вĕсем пĕри те курăнмаççĕ.

Çавалçырма ял Совет исполкомĕ, вулав çуртне йĕркелесе ялти культура центрĕ тăвас вырăнне, унта вутă склачĕ туса хунă.

А. СЕРГЕЕВ.

Çĕнĕ зал уçăлчĕ

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Шупашкарта Чăвашсен Государство филармонин çĕнĕ залĕ уçăлчĕ. Зал уçăлнă ятпа Чăвашсен талăшăпа юрă ансамблĕ тата Чăвашсен Государство Академи театрĕн артисчĕсемпе филармони солисчĕсем пысăк концерт пачĕç. Концертра Чăвашсен ташăпа юрă ансамблĕ çĕнĕ программăпа тухрĕ. Унта чăваш тата совет композиторĕсен произведенисем, вырăс халăх тата Совет Союзĕнчи ытти халăхсен юррисем пулчĕç. Çак çĕнĕ залра малашне тематикăллă концертсем, музыкăпа литература вечерĕсем пулаççĕ.

Композитор **Ф. ЛУКИН.**

Францие Европăри Консультаци Комиссин ĕçĕсене хутшăнтарасси çинчен Англи, Совет Союзĕ тата Америка пĕрле пĕлтерни

1944 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕсем А. Е. Богомолов, Дафф Куппер господин тата Кафри господин Франци республикин Вăхăтлăх правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Бидо господина пĕрле çакăн çинчен пĕлтернĕ: пирĕн Правительствăсем, пĕр-пĕринпе килĕшсе, Франци республикин Вăхăтлăх правительствине Европăри Консультаци Комиссин, Лондонра пурăнса ĕçлекенскерĕн, ĕçĕсене Комиссин тăваттăмĕш яланхи членĕ пулса хутшăнма чĕнеççĕ, тенĕ.

Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен посолĕсем Бидо господина хăйсем çакна шанса тăни çинчен каласа панă: Европăри Консультаци Комиссийĕнче пирĕн çĕршывсен представителĕсем хăйсен француз юлташĕпе пĕрле ĕçлени лайăх результатсем парĕ тата вăл демократин, йĕркелĕхĕн, тĕрĕслĕхĕн пĕтĕмĕшле интересĕсемшĕн çирĕп тата нумай вăхăта пыракан мир тума пулăшĕ, тенĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ тунă доклад çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

США

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклад пирки Америкăри хаçатсем халь те нумай çыраççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн «Россия парни» ятлă умстатьинче çапла çырать: Сталин доклачĕ «çĕнĕрен панă пысăк та калама çук паха парне пулса тăрать, вăл пĕтĕм тĕнчери мирлĕ те аслă йĕркен хăпарса пыракан çуртне çирĕплетет».

«Арканнă патша Российинче большевиксем влаçа хăйсен аллине илнĕренпе 27 çул иртсен, — тенĕ çав статьяра, — аслă государство ӳссе ларчĕ. Вăл пĕтĕм тĕнче ыйтăвĕсем тĕлĕшпе хăй çине çирĕп шанса çеç мар калаçма тата ĕçлеме пултарать, вăл тата аслă держава пулса тăрса, хăйĕн ответлăхне туйса калаçма тата ĕçлеме пултарать».

«Чикаго сан» хаçат Сталин юлташ докладне хĕрӳллĕ саламлать, ăна вăл «коллективлă хăрушсăрлăх тума вăйлă чĕнни» тесе ят парать.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Вашингтонри çар руководителĕсем Сталин доклачĕн юлашки пайне питĕ савăнса йышăннă. Çав пайра Сталин юлташ тепĕр хут çапла калать: Хĕрлĕ Çар хăйĕн хĕвеланăçĕнчи союзникĕсемпе пĕрле халь юлашки задачăна — фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех вĕлерес задачăна—пурнăçласси умĕнче тăрать, тет. Дипломатиллĕ ушкăнсем, тесе çырать малалла корреспондент, Сталин докладне, уйрăмах та вăл Думбартон-Оксри конференци çинчен каланине ырлаççĕ.

«Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: Сталин доклачĕ «хастарлăх парать. Сталин уççăнах çапла каланă: Тегеранра тунă пĕрлĕхе вăрçă хыççăнхи тапхăр валли те сыхласа хăварма кирлĕ, тенĕ».

Радиопа ăнлантарса паракан Стил çапла калать: Сталин доклачĕ унăн мĕнпур выступленисенчен чи пахи пулса тăрать пуль, мĕншĕн тесен вăл мире сыхласа тăма пĕрлешӳллĕ нацисен хăйне уйрăм хĕçпăшаллă организацине тума питĕ вăйлă чĕннĕ. Мĕнле организаци тумаллине Сталин питĕ лайăх кăтартса панă.

«Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, — тет Стил, —унăн сăмахĕ Совет Союзĕ ытти çĕршывсемпе мĕнле никĕс çинче çыхăнса ĕçлесшĕн пулни çинчен вырăссен политикине анлăн кăтартса парать. Вырăссем хăйсен çар хăвачĕ чи çӳле хăпарса çитнĕ вăхăтра союзниксене хăйсемпе туслăн пурăнма сĕнеççĕ. Çакă вăл малашне пĕтĕм тĕнчипе мир тăвассине питĕ телейлĕн кăтартса тăрать».

ЧЕРЧИЛЛЬПЕ ИДЕН ПАРИЖА КАЙНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден ноябрĕн 10-мĕшĕнче самолет çине ларса Парижа тухса кайнă. Вĕсемпе пĕрле правительствăн ответлă чиновникĕсем чылай кайнă. Черчилльпе пĕрле кайнă çынсенчен пĕри—ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн яланхи заместителĕ Александр Кадоган.

ФИНЛЯНДИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУМА ПААСИКИВИЕ ХУШНĂ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири радио пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 10-мĕшĕнче сеймри тĕрлĕ фракцисен представителĕсен пĕрлешӳллĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Çав лару хыççăн Финляндин çĕнĕ правительствине тума Паасикивие хушнă. Паасикиви çĕнĕ правительствăра премьер-министр пулма килĕшнĕ. Кивĕ правительство ноябрĕн 11-мĕшĕнчех вырăнтан тухасса кĕтеççĕ, çавăнпа та çĕнĕ правительство кивĕ правительство вырăнне йышăнма хатĕр пулмалла.

ШВЕЙЦАРИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ДЕПАРТАМЕНЧĔН РУКОВОДИТЕЛĔ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Швейцарин ют çĕршыв ĕçĕсен департаменчĕн руководителĕ Пиле Голац вырăнтан тухни çинчен пĕлтерет. Малалла АФИ агентстви çапла калать: Пиле Голац «Мускав Швейцарипе çыхăну тытма пуçлама килĕшменни çинчен пĕлтернĕ хыççăн» вырăнтан тухма йышăннă, тет.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Мец хулипе Нанси хули секторĕнче союзниксен çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, çаплах наступлени туса пынă. Шато Салэн хулине туртса илнĕ. Халĕ союзниксен çарĕсем Амелекур тата Ампон хулисем патне çитнĕ.

Германире, Гюртген хули районĕнче, союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, çав-çавах наступлени туса пынă. Фронтăн ку участокĕнче тăшман контратакине сирсе янă. Шмидт хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ çĕр çинчи çарсене çапăçма пулăшса пынă. Тăшманăн Хĕвеланăç Голландипе Германири çулйĕрĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 12-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Мец хулипе Нанси хули секторĕнче союзниксен çарĕсем çаплах малалла куçса пыраççĕ. Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Шато Салэн хулинчен 70 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Абуданж-Гара пункчĕ патне çитнĕ. Союзниксен çарĕсем Ремильи тата Сантри-сюр-Нид хулисем патне çитнĕ.

Германире, Гюртген хули секторĕнче, Шмидт хулинчен хĕвеланăçнерехре кĕрешекен союзниксен çарĕсем майĕпен малалла куçса пыраççĕ.

Утрехт, Арнгем, Зволле тата Зютфен хулисен районĕсенче чугун çулсене татнă.

Люневиль хулипе Брюйер хули районĕнче темиçе хула йышăннă. Раон-Лъэтап пункчĕпе Сен Дье пункчĕ хушшинчи районра союзниксен çарĕсем Мерт шывĕ çине тухнă. Мортань вăрманне тăшмантан тасатнă. Вогез тăвĕсен районĕнче союзниксем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Союзниксен авиацийĕ Хĕвеланăç Германие темиçе хутчен хаяррăн тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армин Англи чаçĕсем Форли хулине йышăннă хыççăн çав хуларан çурçĕр-хĕвеланăçнелле малалла куçнă. Италири фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем çеç кĕрешнĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 12-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армин Англи чаçĕсем Нуово каналĕ урлă каçнă. 5-мĕш арми участокĕнче Инди дивизийĕн чаçĕсем Модильяно хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Монте Помпенье ятлă çӳллĕ вырăнта лайăх позицисем тытса илнĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче союзниксен çарĕсен патрулĕсем кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç тупăсемпе персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çапăçусен районĕнчи, Германири, Австрири тата Италири объекчĕсене тапăннă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Халь уçăлакан электротехника техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: техникум секретарĕ, вĕренӳ пайĕн секретарĕ, комендант, бухгалтер, агент-кладовщик, истопниксемпе уборщицăсем, гардеробщиксем, дворник.

Ĕçукçи — килĕшнĕ тăрăх. Комендантa, дворнике тата истопнике хваттер параççĕ. Техникумра ĕçлекенсем столовăйра апатланаççĕ тата вĕсене завод магазинĕ çумне çирĕплететеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. К. Маркса, 82.

1 5—1.

Шупашкарти кинотеатра дворник, кочегар, сторож, уборщицăсем кирлĕ. Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх.

1944 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа взаимнăй страховани системине çĕнĕ йĕркепе укçа парса тăрасси çинчен Всекопромсоветкассăсен президиумĕпе СССР Госбанкĕн правленийĕ йышăннă постановлени тăрăх, Чăвашпромстрахкасса промысла кооперацийĕн системине кĕрекен мĕнпур промартельсен ноябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кам кама мĕн чухлĕ тӳлемеллине тĕрĕслеме тата çав срок тĕлне октябрь уйăхĕшĕн расчет ведомоçĕсене пама хушать. Чăвашпромстрахкасса промартельсене çакăн пирки асăрхаттарать: малта кăтартнă срок иртсен, кам кама мĕн чухлĕ тӳлемеллине тепĕр хут шутлама ыйтнине шута илмеççĕ.

Чăвашпромстрахкасса.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00791 Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 16.000 экз.